27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 26 ЭРНЕКУН 103(6598) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Ҫуракинче тухăҫлă та лайăх ĕҫленĕшĕн, ĕҫҫынни депутачĕсен Елчĕк райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми ҫине ҫак колхозсене кĕртнĕ:

21. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. В. Зайцев юлташ). Колхоз ҫураки планне 112 процент тултарнă, 491 гектар вырăнне 551 гектар акнă. Ĕҫĕн пахалăхĕ лайăх, агротехникăллă мероприятисене пĕтĕмпех пурнăҫланă, тĕш тырăсене кĕске вăхăтра тата сеялкăпа акнă.

22. «Марс» колхоз (председателĕ А. Г. Гаязов юлташ). Колхоз ҫуртыррисене 756 гектар акнă, вĕсене кĕске срокра, лайăх пахалăхпа акнă. Ҫураки планне 110 процент тултарнă.

23. Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ «Ново-Ищеряково» колхоз (председателе О. Е. Егоров юлташ). Колхоз ҫураки планне тултарнă, 138 гектар тырă акнă. Тĕштырăсене пурне те сеялкăпа акнă.

24. Дзержинский ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ П. Петров юлташ). Колхоз ҫураки планне 103 процент тултарнă, 184 гектар вырăнне 187 гектар акнă. Ĕҫĕн пахалăхĕ лайăх.

Фронтовой вунăкунлăхра ҫуракине вĕҫлер

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, ĕнер фронтовой вунăкунлăх пуҫланчĕ. Ҫак вунăкунлăхра ҫураки ĕҫĕсен планне тултармалла кăна мар, фермăсем ҫумĕнчи участоксене те, ҫар ҫыннисен ҫемьисене пулăшмалли фондăн гектарĕсене те акса, плана ирттерсе тултармалла.

Республикăри малта пыракан Вăрнар районĕ ашне каярах пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсене акса пĕтерчĕ, планран ирттерсе ҫав тырăсене 600 гектар ытла акрĕ. Майăн 24-мĕшĕнче Красноармейски район тĕштырăссне акса пĕтерчĕ. Ҫавăн пекех Чурачăк, Ҫĕрпӳ, Калинино районĕсем те ҫураки ĕҫĕсене ăнăҫлăн туса пыраҫҫĕ. Иртнĕ пилĕккунлăхра Элĕк, Красноармейски, Вăрмар районĕсем те лайăх хăвăртлăхсемпе ĕҫлерĕҫ. Республикăра ҫураки планне пĕтĕмпех тултарнă колхозсем сахал мар ĕнтĕ. Малта пыракан районсенче кăна мар, юлса пыракан районсенчи чылай колхозсем те ака ĕҫне вĕҫлерĕҫ. Сăмахран, Шăмăршă районĕнчех илер. Ытти районсем хушшинче вăл 25-мĕш вырăн йышăнать, анчах та «Заря свободы», «Знамя Октября», Косновский ячĕпе тăракан колхозсем майăн 20-мĕшĕ тĕлнех ҫураки планĕ тăрăх пур культурăсене те акса пĕтернĕ. Советски районра, пĕтĕмĕшпе илсен, ҫураки ҫителĕксĕр хăвăртлăхпа пырать, кунта пурĕ те 70 процента яхăн кăна акнă. Ҫав вăхăтрах «Комбайн», «За коммунизм» тата ытти хăшпĕр колхозсем ҫураки планне тултарнă. «Комбайн» колхоз планран ирттерсе 7,25 гектар акнă.

Ҫак тĕслĕхсем вĕсем пирĕн колхозниксен ĕҫлес хастарлăхĕ пысăкки ҫинчен калаҫҫĕ. Ҫакă вăл пĕтĕмпех ĕҫе организацилеме, колхозниксемпе колхозницăсене ĕҫе мобилизацилеме пĕлнинчен килет. Советски районри «Комбайн» колхозах илер. Ку колхоз халиччен нихăш енчен те палăрса тăман, анчах кунта ҫуракине организацилеме пĕлнĕ. Колхозниксем пур ĕҫре те уйрăм сдельщинăпа ĕҫленĕ, колхозра столовăй пур, акара ĕҫлекен колхозниксене хиртех кунне 2 хутчен апатлантараҫҫĕ. Лашасем те кунта ытти колхозсенчи лашасенчен уйрăм мар, анчах та вĕсене старши конюх Юманкин юлташ аван пăхать, вĕсене каннă вăхăтра уйрăх курăк ҫине ярса апатлантарать. Ĕҫре социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă. Колхозница Малышева, Абрамова, Иванова, Филиппова, Осипов тата ыттисем те кулленхи ĕҫ нормине 120—160 процент тултарса ĕҫленĕ. Пĕтĕм колхозĕпе кулленхи графика яланах ирттерсе тултарса пынă. Ҫакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенче те тупма пулать.

Ҫапла малта пыракан районсемпе колхозсем мĕнле ĕҫлемеллине лайăх кăтартса параҫҫĕ. Фронтовой вунăкунлăхра малта пыракан районсемпе колхозсен ĕҫри опычĕсемпе анлăн усă курмалла.

Акара тракторсемпе тата лашасемпе пĕлсе усă куракан колхозсем ăнăҫлăн ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсен уйхирĕсенче тракторсем 20—22-шер сехет ĕҫлеҫҫĕ, ĕҫĕн тухăҫлăхĕ те пысăк, агротехника мероприятийĕсене лайăх пурнăҫласа пыраҫҫĕ. Шăхасан, Красноармейски, Ҫĕрпӳ, Вăрнар, Елчĕк, Йĕпреҫ, Комсомольски, Тăвай МТС-ĕсем ҫураки вăхăтĕнче тумалли ĕҫсен государство планне вăхăтра тата лайăх пурнăҫларĕҫ, колхозсене пысăк тухăҫлă тырпул пикĕсне хывса хăварма пулăшрĕҫ. Шăхасан МТС-ĕ майăн 20-мĕшĕ тĕлне кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа вăтамран 103,6-шар гектар, Елчĕкпе Йĕпреҫ МТС-ĕсем 92-шер гектар сухаланă, ҫав вăхăтрах Улатăр, Октябрьски, Пăрачкав, Шăмăршă МТС-ĕсем кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 25—27-шер гектар кăна сухаланă. Паллах ĕнтĕ ҫак тĕслĕхсем хăш МТС мĕнле ĕҫленипе хăйсемех уҫҫăн кăтартса параҫҫĕ.

Республикăри чи кая юлса пыракан МТС-сенчех ĕҫе организацилеме пĕлнĕ бригадăсенче ĕҫ ăнăҫлă пынине курма пулать. Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи Афондеркин юлташ ертсе пыракан бригада ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 120 процент пурнăҫланă, ҫав вăхăтрах Падюков ертсе пыракан трактор бригади плана пурĕ те 60 процент кăна тултарнă. Кунта тракторсем час-часах ĕҫлемесĕр лараҫҫĕ. Ҫак тĕслĕх вăл МТС-ри тракторсем мар, тимсĕр ĕҫлекен трактористсем ĕҫе тăсса пыни ҫинчен калать.

Ĕҫĕн хăвăртлăхне ӳстерме пур майсем те пур. Фронтовой вунăкунлăхра ҫураки планне пур культурăсемпе те тултарма пулать. Ун пирки районсенчен килекен хыпарсем уҫҫăнах каласа параҫҫĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ фронтовой вунăкунлăх ирттересси ҫинчен йышăннă решенине сӳтсе-явнă хыҫҫăн Ҫĕрпӳ районĕнчи колхозсем ҫуракине пур культурăсемпе те июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне, Красноармейски район майăн 29-мĕшĕ тĕлне, Калинино районĕ майăн 28-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех вĕҫлеме йышăннă. Ҫак обязательствăна пурнăҫлас тĕлĕшпе вĕсем конкретлă плансем тунă. Ҫав плансене вĕсем ăнăҫлăн пурнăҫлама тытăнчĕҫ. Калинино районĕнчи колхозсем ҫар ҫыннисен ҫемьисене пулăшмалли фонд валли ҫураки планĕнчен ирттерсе 103 гектар акнă. Ҫĕрпӳ районĕнчи колхозсем майăн 25-мĕшĕ тĕлне фермăсем ҫумĕнчи участоксене 167 гектар акнă.

Фронтовой вунăкунлăхра юлса пыракан Хĕрлĕ Чутай, Ҫĕмĕрле, Первомайски, Кувакино, Шăмăршă районĕсене уйрăмăнах тимлĕн, пĕтĕм вăя хурса ĕҫлеме тивет. Ҫав районсенче кашни колхозăн куллен мĕн чухлĕ акмаллине ҫирĕп график туса, ăна пĕр пăркаланмасăр пурнăҫласа пымалла. Хĕрлĕ Чутай районĕн вăтамран кашни кун 500 гектартан кая мар акма тивет, халиччен ҫав район 350—400 гектар кăна акса пынă. Халĕ ĕҫĕн хăвăртлăхне ӳстерме пур майсем те пур, вăл майсемпе туллин усă курмалла.

Фронтовой вунăкунлăха ăнăҫлăн ирттерес тесен, ҫак вăхăтри ĕҫсен ответлăхĕ ҫинчен мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла, вĕсене пурне те ĕҫе мобилизацилемелле. Партипе комсомол организацийĕсемпе совет органĕсен ĕҫе большевикла ертсе пымалла, массăллă-ăнлантарулă ĕҫе анлăн сармалла, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен, трактористсемпе трактористкăсен массине социализмлă ăмăртăва явăҫтармалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем, агрономсем тата сĕрĕҫ органĕсенчи рабочисем! Ҫуракине ăнăҫлăн вĕҫлесси, эсир вăй-халăра хĕрхенмесĕр ĕҫленинчен килет. Фронтовой вунăкунлăхра ҫуракине пĕтĕмпе тата лайăх пахалăхпа вĕҫлессишĕн ырми-канми, кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫлер!

Ҫуракине хăвăртрах та лайăхрах ирттерер! Фронтовиксен ҫемьисене пулăшмалли фонд валли тата фермăсем ҫумĕнчи участоксене планран ирттерсе ҫĕршер гектар акса хăварар! Ҫакă вара Верховный Главнокомандующий Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕ ячĕпе панă приказне ĕҫпе ответлени пулĕ.

Итали правительствин представителĕ П. Кварони господин Совет Союзне килни

Ҫак ҫулхи майăн 24-мĕшĕнче Мускава Итали правительствин ССР Союзĕн правительстви ҫумĕнчи представителĕ Пиетро Кварони господин ҫитнĕ.

Хусан вокзалĕнче П. Кварони господина СССР-ĕн Ют ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. Н. Фомин юлташ хирĕс тухса кĕтсе илнĕ.

Ҫуракине вĕҫлемелли вунăкунлăх

ҪУРАКИНЕ ВĔҪЛЕМЕЛЛИ ВУНĂКУНЛĂХ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	мĕнле вырăн йышăнаҫҫĕ
Ҫĕрпӳ	1
Красноармейски	2
Чурачăк	3
Элĕк	4
Вăрнар	5
Калинино	6
Шупашкар	7
Муркаш	8
Тăвай	9
Елчĕк	10
Сĕнтĕрвăрри	11
Вăрмар	12
Шăхасан	13
Куславкка	14
Октябрьски	15
Канаш	16
Сĕнтĕр	17
Етĕрне	18
Советски	19
Комсомольски	20
Ишлей	21
Чкаловски	22
Йĕпреҫ	23
Пăрачкав	24
Улатăр	25
Ҫĕмĕрле	26
Шăмăршă	27
Хĕрлĕ Чутай	28
Первомайски	29
Кувакино	30

Укерчĕк ҫинче: Елчĕк районĕнчи Хĕрлĕ Ялав илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăн бригадирĕ П. Леонтьев юлташ. Унăн бригади ҫуракине колхозри ытти бригадăсенчен малтан вĕҫленĕ.

Кашни гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн 3-мĕш бригадăпа ăмăртать.

П. Леонтьев бригади акнă тырăсем тикĕс шăтса тухнă, лайăх ҫитĕнеҫҫĕ.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĔШТЫРĂСЕНЕ АКСА ПĔТЕРНĔ

ЭЛĔК, майăн 25-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Майăн 24-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсем 10.275 гектар акнă. Ҫар ҫыннисен ҫемьисене пулăшма тата ферма ҫумĕнчи участоксене планпа пăхниччен ирттерсе 75 гектар акнă.

Красноармейски район тĕштырăсене акса пĕтернĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 25-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, майăн 24-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсене 8.900 гектар акса, плана тултарнă. Ҫакă вăл мĕнпур ҫуртыррисем акмалли лаптăкăн 95 процентĕ пулать.

Карай ялсоветĕнчи «Красная звезда» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) тĕштырăсене майăн 20-мĕшĕ тĕлне, ҫĕрулмипе техникăллă культурăсене майăн 22-мĕшĕ тĕлне акса е лартса пĕтернĕ. Ҫавăн пекех Калинин ячĕпе тăракан колхоз та тĕштырăсемпе техникăллă культурăсене акса пĕтернĕ. Колхозниксем А. Данилов, З. Григорьева, Г. Яковлев, С. Евдокимов куллен 1,30—1,40 гектар сухалаҫҫĕ.

Районĕпе 331 гектар вырăнне 220 гектар нактăр акнă, 1.213 гектар вырăнне 960 гектар ҫĕрулми лартнă.

МТС-ăн тракторĕсем колхоз уйхирĕсенче ҫаплах ăнăҫлă ĕҫлеҫҫĕ. Ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне паянхи кун тĕлне 125 процент тултарнă, 1.500 килограмм горючи перекетленĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

ТĂВАЙ МТС-Ĕ ҪУРХИ ĔҪСЕН ПЛАННЕ ТУЛТАРНĂ

Майăн 24-мĕшĕ тĕлне Тăвай МТС-ĕ (директорĕ И. Белоусов юлташ) тракторсемпе ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 100,6 процент тултарнă. План тăрăх 3.832 гектар сухалас вырăнне 3.862 гектар сухаланă.

Ҫуракине вĕҫлемелли фронтовой вунăкунлăха хутшăнса

ҪĔРПӲ, майăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Ҫуракине вĕҫлемелли фронтовой вунăкунлăх ирттересси ҫинчен ВКП(б) Обком бюровĕн решенине илсенех, районра колхоз председателĕсен, колхоз бригадирĕсемпе парторганизаци секретарĕсен канашлăвне ирттертĕмĕр. Тĕштырăсемпе пăрҫа йышши культурăсене район паянхи кун тĕлне 92 процент акнă. 72 колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ, 4 колхоз паян-ыран пĕтереҫҫĕ. «Глиссер», «Ильич», «Ĕмĕт» тата ытти чылай колхозсем ҫĕрулмисемпе кантăрсене те акса пĕтерчĕҫ.

МТС ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 111 процент пурнăҫларĕ. Тракторсене халĕ юлса пыракан колхозсене ятăмăр. Сăмахран, «Машинострой» колхозра икĕ трактор ĕҫлет. Паянхи кун тĕлне ферма ҫумĕнчи участоксене 167 гектар акнă. Районри 73 колхоз планран ирттерсе ҫар ҫемьисене пулăшмалли фонд валли 32 гектар акнă. Ку ĕҫ малалла та ăнăҫлăн пырать.

Ҫураки планне пур культурăсемпе те июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăҫлассишĕн кĕрешетпĕр.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КАЛИНИНО, майăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). «Броневик», «Чăваш Коммуни», «Партизан», «Социализм», «Алма» колхозсем ҫĕрулми те лартса пĕтерчĕҫ. Паянхи кун тĕлне 555 гектар ҫĕрулми лартнă, 147 гектар ытла кантăр акнă. Тепĕр 2 кунтан, махорка тата ытти ҫавăн пек культурăсемсĕр пусне, эпир пĕтĕмпех акса пĕтеретпĕр.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Район ҫураки ĕҫĕнче юлса пыни пире фронтовой вунăкунлăхра кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫлеме хушать. Колхоз председателĕсен, бригадирсен тата пуҫламĕш парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕсене подрайонсенче ирттертĕмĕр. Халиччен районĕпе кашни кун 360—400-шер гектар акнă пулсан, вунăкунлăх вăхăтĕнче 500-шер гектартан кая мар акмалла. Ҫакна эпир пурнăҫлама пултаратпăр. Лашасене колхозниксем халĕ уйрах тăрантараҫҫĕ. «Красное Сормово», Калинин ячĕпе тăракан колхозсен лашисем питĕ вăйсăрччĕ. Курăкпа тăрантма тытăнсан вĕсен лашисем аванланчĕҫ.

Юлашки вăхăтра МТС тракторĕсем те аван ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Афондеркин юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади планпа 420 гектар сухалас вырăнне 500 гектар сухаларĕ, Яндарайкин бригади ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 102 процент тултарчĕ.

Ҫуракине вĕҫлемелли фронтовой вунăкунлăхра ҫураки планне ытлашшипех тултарассишĕн ырми-канми ĕҫлетпĕр.

Г. ЗАХАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комсомолецсем тухăҫлă ĕҫлеҫҫĕ

КАЛИНИНО. (Телефонпа). «Броневик» колхоз районра малта пырать. Унти комсомолкăсем Т. Петрова, К. Лаврентьева, М. Илларионова юлташсем суха тупă ҫĕрте кашни кун нормăна 120—125 процент пурнăҫласа пыраҫҫĕ. Кунта ĕҫ пахалăхĕшĕн кĕрешеҫҫĕ.

Кашни бригадăрах комсомолецсем агитаторсем пулса ĕҫлеҫҫĕ. Боевой листоксем, стена хаҫачĕсем кăлараҫҫĕ. Ҫураки ĕҫĕсем пуҫланнăранпа бригадăсенче 7 номер боевой листоксем, стена хаҫачĕ 2 номер кăларнă. Вĕсенче звено членĕсем мĕнле ĕҫлесе пынине анлăн ҫутатса тăраҫҫĕ. Лашасене кантарнă чухне стена хаҫачĕсемпе боевой листоксем тавра колхозниксем пухăнаҫҫĕ, хаҫатри материалсене вулаҫҫĕ тата ҫитес номер валли материалсем параҫҫĕ.

«Броневик» колхозри комсомолецсем иртнĕ ҫул мухтава тивĕҫ ĕҫленĕшĕн ВЛКСМ райкомĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ. Вĕсем ҫак хисеплĕ Ялава кăҫал та хăйсен аллинчех хăварасшăн кĕрешеҫҫĕ.

«Трактор» колхозри комсомолецсем те аван ĕҫлеҫҫĕ. Н. Семенов, И. Михайлов комсомолецсем кашни кунхи нормăна ытлашшипех тултараҫҫĕ. Комсомолец Н. Петров икĕ вăкăрпа сухалать, нормăна куллен 140—150 процент тултарать.

Г. ПАВЛОВ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Ҫулталăк ҫурă каярах, пирĕн Тăван ҫĕршыв умне вилĕм хăрушлăхĕ тухса тăрсан, нимĕҫсем Атăл патне, Сталинград патне пырса ҫитсен, эпĕ хам ĕҫлесе тупнă укҫа-тенкĕпе боевой самолет илсе, ăна хамăрăн земляка — Саратов ҫыннине, Сталинград Фронтĕн летчикне Еремин майора патăм.

Эсир Хĕрлĕ Ҫар ячĕпе мана, рядовой колхознике, тав туса каланă сăмах мĕнпур колхоз хресченĕсене хавхалантарса ячĕ. Вырăс ҫыннисен укҫи-тенкипе тунă пиншер самолетсем Сталинград фронтне вĕҫсе пычĕҫ. Ҫав фронтра ун чухне пирĕн тăван ҫĕршыв кун-ҫулĕ пирки ĕҫ татăлатчĕ. Колхозниксен самолечĕсем нимĕҫсене Сталинград патĕнче аркатмаллах пырса ҫапма тăван Хĕрлĕ Ҫара вăйлăн пулăшрĕҫ. Ҫавăн хыҫҫăн нимĕҫсем вара сывлăш ҫаврса вăй илеймерĕҫ.

Эпĕ хамăн самолет ҫапăҫура мĕнле ĕҫленипе тăтăшах сăнаса тăратăп. Гварди майорĕ Еремин — Сталинград оборонин геройĕ, Ростов, Таганрог, Мелитополь, Никополь патĕнчи тата Крымри сывлăшри ҫапăҫусенче пулнă герой халĕ те тăшмана ытти фронтсенче аркатать. Анчах вăл мана нумаях пулмасть, ҫапла пĕлтерчĕ: нумай фрицсене пĕтерсе тăкнă манăн самолет тĕрĕс-тĕкĕлех пулин те, ĕҫлесе пĕтсе ҫитнĕ ĕнтĕ. Самолетăн ĕмĕрĕ кĕске.

Ҫав пĕлтерĕве илнĕ хыҫҫăн эпĕ Хĕрлĕ Ҫара ҫĕнĕ парне кӳме — ҫĕнĕ самолет илсе пама шут тытрăм, ҫавна илме эпĕ 100.000 тенкĕ укҫа хыватăп.

Манпа пĕрле колхозра манăн икĕ хĕр, кин тата пичче ĕҫлеҫҫĕ. Иртнĕ ҫулта эпир пин ĕҫкунĕ ытла ĕҫлесе илтĕмĕр. Пыл илмелли плана виҫĕ хут ирттерсе тултарнăшăн, мана, утарта ĕҫлекен колхознике, ĕҫшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе тăрăх, пыл нумай пачĕҫ. Колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕҫлесе илнĕ ҫав тупăшпа эпĕ ҫĕнĕ самолет тунă ҫĕре паратăп.

Ҫав парнене парса, эпĕ мĕнпур колхозниксене чĕнсе каласшăн.

Вырăс ҫыннисем! Тăван ҫĕршыв умне вилĕм хăрушлăхĕ тухса тăрсан, эпир хамăрăн укҫа-тенкĕсене хĕрхенмен. Халĕ вĕте, Хĕрлĕ Ҫар воинĕсем тăшмана пĕр вĕҫертмесĕр йĕрлесе-хăваласа пынă чухне, вĕсем ҫĕнтерӳ хыҫҫăн ҫĕнтерӳ тунă чухне, совет паттăрĕсем уйрăм участоксенче тăшман территорийĕ ҫине кĕрсе кайнă чухне, тăшмана вилĕм шăткне тĕртсе ярса пуҫĕпех пĕтерес тесе тăтăклăн пырса ҫапмалли кун килсе ҫитнĕ чухне, Тăван ҫĕршыва хамăрăн мĕнпур ĕҫлесе илсе перекетленĕ укҫа-тенке парар. Ирсĕр нимĕҫрен эпир нумай асап куртăмăр. Манăн хамăн та тăван пиччеп ывăлĕ пĕр хыпарсăр ҫухалчĕ, нимĕҫрен инкек курмашли пĕр совет ҫемьи те ҫук пулĕ. Ылханлă тăшмана кашнин хăвăртрах пĕтерсе тăкас, вăрҫа хăвăртрах пĕтерес килет. Антив пирĕн колхозниксен укҫи-тенкипе тунă самолетсемпе танксем, тупăсем ҫĕнтерĕвĕн аслă сехетне ҫывхартма пулăшчăр!

Иосиф Виссарионович, пирĕн Сире кăҫал эпир хамăр колхозра вăйлă тырпул туса илме ĕмĕтленни ҫинчен ҫырса пĕлтерес килет. Саратов облаҫĕнчи Ново-Покровск районĕнчи «Стахановец» колхоз (эпĕ унта колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕҫлетĕп) ирттерех пулакан тырпулсене 6 кун хушшинче акса пĕтерчĕ. Пур тырăсене те кĕрхи ҫĕртме ҫине, агротехника правилисем тăрăх акнă. Эпир пĕтĕм ĕҫе, ҫанталăк кирек мĕнле пулсан та, гектартан 100—120 пăт туса илес тесе организацилетпĕр. Халĕ пирĕн 50 ҫемье хурт-хăмăр пур, эпир сахал мар пыл илетпĕр. Пĕлтĕр эпир государствăна пур парăмсене те парса татрăмăр, кăҫал ытлашшипех паратпăр. Колхозниксене те ĕҫкунĕсем тăрăх пысăк тупăш валеҫсе паратпăр, фронтовиксен ҫемьисене, отечественнăй вăрҫă инвалидсене пулăшма пултаратпăр.

Эсир пире колхозра пĕр шухăш-кăмăллă ҫемье пулса пурăнма вĕрентрĕр. Халĕ, вăрҫăн йывăр вăхăтĕнче, Сирĕн ҫав аслăлăх пире мĕнпур йывăрлăхсене ҫĕнтерме, пур тĕрĕслеве те тӳссе иртерме пулăшать, пирĕн колхозăн богатырла вăйне хавшатма пултаракан вăй тĕнчере ҫук.

Иосиф Виссарионович, ман Сирĕнтен ыйтмалли пур. Эпĕ чăн юлашки конструкципе тунă истребитель илсе, ăна Еремин майор аллине пама ирĕк ыйтатăп.

Иосиф Виссарионович, пирĕн хаклă аттемĕр, Сире «Стахановец» ялхуҫалăх артелĕн колхозникĕсенчен салам. Сире вĕсем ырă та пысăк сывлăх сунаҫҫĕ. Вĕсем пĕлеҫҫĕ: часах аслă та ҫутă кун — нимĕҫсене пĕтĕмĕшпех ҫапса аркатакан Хĕрлĕ Ҫара Сирĕн приказ тăрăх пĕтĕм ҫĕршыв салют парас кун часах ҫитет.

Ферапонт ГОЛОВАТЫЙ.

Саратов облаҫĕнчи Ново-Покровск районĕнчи „Стахановец" колхоз,

Ферапонт Петрович ГОЛОВАТЫЙ колхознике

Ферапонт Петрович, Эсир Хĕрлĕ Ҫарăн сывлăш вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн, манăн салама тата Хĕрлĕ Ҫар тав тунине йышăнăр.

Эсир ыйтнисем пурте пурнăҫа кĕрĕҫ.

И. СТАЛИН.

Киев облаҫĕнчи колхозсем сахăр кăшманĕ акмалли плана тултарнă

Киев облаҫĕнчи колхозсем сахăр кăшманĕ акса пĕтернĕ, плана ытлашшипех тултарнă. Чылай районсем планран ирттерсе темиҫе ҫĕршер гектар акса хăварнă.

Халĕ колхозниксем акнă тырпула мĕнле те пулин лайăхрах пăхса ӳстермелле тăвасчĕ тесе ĕҫлеҫҫĕ. (ТАСС).

Пысăк Чуйски каналăн пĕрремĕш черетре тумалли пайне туса пĕтернĕ

Майăн 15-мĕшĕнче Пысăк Чуйски каналăн пĕрремĕш черетре тумалли пайне туса пĕтернĕ, ăна хăвăрт тумалли майсемпе тунă. Ҫав каналăн шывĕ колхозсен 6.000 гектар ҫĕрĕпе колхозниксен пахчисене шыв парса тăрĕ. Кунсăр пуҫне, Киргизире чи пысăк гидростанцисенчен пĕрин пĕрремĕш черетре тумалли пайне туса пĕтернĕ. Ҫав гидростанци республика столицине — Фрунзе хулине—электричество парса тăрать. Ҫак станцие халăх стройкин меслечĕсемпе тăваҫҫĕ. (ТАСС)

Вырăс юррисене юрлакан хорсен Пĕтĕм Российăри смотрĕ

СССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи Искусство ĕҫĕсен комитечĕ кăҫал ҫулла вырăс халăхĕн юррисене юрлакан хорсен, ансамбльсен тата солистсен Пĕтĕм Российăри пĕррмĕш смотрне ирттерет. Смотра 30 хор ытла, темиҫе ҫĕр ансамбль, темиҫе пин юрлакан хутшăнать.

Хорсемпе ансамбльсене тата солистсене суйласа илмелли пĕррмĕш тур вырăнсенче июнĕн 25-мĕшĕнче пуҫланать те июлĕн 5-мĕшĕччен пырать. Иккĕмĕш тура, тĕрлĕ облаҫсем хушшинче туса ирттермеллипе хутшăнма суйласа илнисем Мускавра, Ленинградра, Свердловскра, Саратовра, Горькире тата Дон ҫинчи Ростовра юрласа кăтартаҫҫĕ.

Пуринчен ытларах палăрнă хорсемпе ансамбльсем тата солистсем Мускаври юлашки пысăк концертра юрласа кăтартаҫҫĕ. Чи лайăх хорсемпе ансамбльсене тата солистсене хисеплĕ грамотăсемпе премисем параҫҫĕ. (ТАСС).

ВЦСПС-па Суту-илӳ Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата СССР-па РСФСР Центросоюзĕ, потребкоопераци предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 ҫулхи 1-мĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, Чăвашсоюз системинче кĕрекен ҫак сельпосемпе магазинсене премисем пама йышăннă:

Иккĕмĕш преми — Йĕпреҫ районĕнчи Чăваш Тимеш сельповĕн магазинне (магазин заведующийĕ **Сергеев** юлташ)—400 тенкĕ, Муркаш районĕнчи Тивĕш сельповĕн магазинне (магазин заведующийĕ **Бурдасова** юлташ)—200 тенкĕ;

Виҫҫĕмĕш преми — Канаш районĕнчи Вăтапуҫ сельповĕн Каракăлри лавкине (заведующийĕ **Егоров** юлташ) — 300 тенкĕ тата Вăтапуҫ сельповĕн Кĕҫĕн Пикшихри лавкине (заведующийĕ Николаев юлташ)—150 тенкĕ памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 23-мĕшĕнче фронтсенче пăлтă улшăнусем пулман.

Майăн 22-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ӳкернĕ.

МАЙĂН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 24-мĕшĕнче фронтсенче пăлтă улшăнусем пулман.

Майăн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем ним мĕнсĕр 27 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвелапăçĕнерехре тăшман ирхине пирĕн гвардейски чăсĕн позицийĕсене атакăланă. Совет боецĕсем, нимĕçсене тупăсемпе, минометсемпе тата пулеметсемпе тĕме пусăрнă, вара гитлеровецсем васкасах каялла чакма пуçланă. Çав кун нимĕçсем тата 4 хут атакăна кайнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнман. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 ытла салтакĕпе офицерĕ выртса юлнă. Нимĕçсен 20 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 4 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 3 бронемашина, 40 автомашина тата 15 лав пĕтерсе тăнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче нимĕçсен артиллери батарейĕ пирĕн позицисене персе тăнă. Старши сержант Сахаров пĕр ушкăн боецсемпе пĕрле тăшман тылне кĕрсе кайнă та çав гитлеровецсене тапăннă. Кĕске тытăçура пирĕн боецсем нимĕç артиллеристчĕсене пĕтерсе тăнă, тупписене сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра гвард. рядовойĕ Федор Залеский пĕр ушкăн разведчиксемпе пĕрле тăшман йышне кĕрсе кайнă. Разведчиксем 6 нимĕçе вĕлернĕ, 2 нимĕçе тыткăна илнĕ, вара тĕрĕс-тĕкелех хăйсен чăçне таврăннă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăç-нерехре тăшман уйрăм участоксенче çапăçса разведка туса хăтланнă. Анчах та ăна пирĕн оборонăн малти хĕррине çитиччĕнех çапса янă.

* * *

Мозырь хулинчен хĕвелапăçнерехре пирĕн снайпер Чикаш ĕçĕн лейтенантпа Самохин ефрейтор çĕрле хамăр çарсемпе тăшман çарĕсем хушшинчи никам та йышăнман вырăна тухнă та нимĕç позицийĕсенчен инçех те мар выртнă. Ирхине нимĕçсен тылĕнче çулпа пыракан походнăй кухня курăнса кайнă. Самохин пĕрре персех çав кухня умĕнче ларса пыракан нимĕçе вĕлернĕ. Кăштах тăрсан, Чикаш кухня патне чупса пыма тăнă гитлеровеца вĕлернĕ. Самохин çак çулпа котелоксем çĕклесе пыракан 2 нимĕçе вĕлернĕ. Снайперсем 2 кун хушшинче мĕн пурĕ 19 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Майăн 23-мĕшĕнче Хура тинĕс флочĕн карапĕсем нимĕçсен подводнăй лодкине ишыва путарнă.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр ялта тăракан нимĕçсен гарнизонне тапăннă. Совет патриочĕсем 100 нимĕçе ытла вĕлернĕ тата 3 çар складне сирпĕнетрсе янă. Партизансен тепĕр отрячĕ юлашки кунсенче тăшманăн 6 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне тата çак отрядри партизансем пысăк çулсемпе ахаль çулсем çинче 27 грузовой автомашина, 5 çăмăл автомашина, 14 лав сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн телеграфпа телефон пралукне темиçе километр таршшĕ татса тунă.

Хĕрлĕ Çар енне венгерсен 1-мĕш горнострелковăй бригадинчен артиллеристсем пĕр ушкăнĕ куçнă. Çак артиллеристсем çапла каласа панă: «Пирĕн отряда 50 çын пулнă, эпир боеприпас складне хураллаттăмăр. Вырăс автоматчикĕсем çак склад патне сывăхарса пычĕç. Имре Бор сержант пире выçăпа-леме чарчĕ. Салтаксем хĕпĕртесех сержантпа килĕшнĕ. Фронта туха киличчен эпир пурте тĕрĕс курнă. Пирĕнтен никамăн та хăйĕн пуçне Гитлерăн сăнтăт пулмарĕ».

Венгерсен 2-мĕш дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ лейтенант Пал Мелейтер çапла каласа кăтартнă: «Тĕрĕссине каласан, пирĕн çарсем хĕрсе çапăçмаççĕ. Венгри офицерĕсем нимĕçсен хушшине çыс туса тăраççĕ, нимĕç контролерĕсем пирĕн пăмасăр вĕсем нимĕн те тума пултараймаççĕ».

* * *

Нимĕçсен командованийĕ майăн 23-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă сводкăра çапла çырнă: Дубоссары хулинчен кăнтăрарахра нимĕç çарĕсем «советсен темиçе стрелковăй дивизийĕпе пĕр танковăй бригадине» пĕтерсе тăнă, тенĕ.

Нимĕçсен çак пĕтерекенĕ çине пĕр сăмах та çук. Фронтăн Дубоссары хулинчи участокĕнче кăнтăртарахра виçĕ эрне ытла ĕнтĕ пĕр пысăк çапăçу та пулман, уйрăм участоксенче кăна тĕллĕн-тĕллĕн çапăçкаласа илнĕ. Советсем енчен çак çапăçусенче пĕчĕк вăйсем кăна пулнă. Çапла вара нимĕçсем нимĕнле те «темиçе стрелковăй дивизипе пĕр танковăй бригадăна» пĕтерме пултарайман, паллах, пĕтермен те. Çакăнтан ĕнтĕ çав пĕлтерӳ Гитлер ставкинчи суеçĕсен пăсăлнă пуç-тăнĕсем нимрен нимĕр пĕсĕрни кăна пулса тăни лайăх курăнса тăрать. Султалăк çурă ытла ĕнтĕ гилтеровецсем çапăçу хирĕнче тунă пĕр çĕнтерӳпе те мухтанма пултараймаççĕ. Çак вăхăтранпа вĕсем нимĕç çарĕсен нихăçан пулман тĕрлĕ çитĕнĕвĕсем çинчен шухăшла-шухăшла кăлараççĕ, çапла майпа хăйсен пуçĕсене усăнă салтакĕсене тата Германи халăхне кăшт та пулин чун кĕртесшĕн. Гитлер ставкинчи суеçĕсем çинчен чăннипех те ĕнтĕ çапла калама юрать: «Пуш арман çилсĕр те авăрать».

Совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç Мускавра пулса иртнĕ виççĕмĕш митингĕ

Майăн 21-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çурчĕн колоннăллă залĕнче çамрăксен фашизма хирĕçле виççĕмĕш митингĕ пулса иртнĕ.

Митингра Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн çамрăк воинĕсем, нимĕç оккупанчĕсемпе партизансен отрячĕсенче кĕрешекен çамрăксемпе хĕрсем, тылра çĕнтерӳ хĕçпăшалĕ тăвакан çамрăк рабочисемпе колхозниксем пулнă. Вĕсенчен нумайĕшне Тăван çĕршывшăн пыракан кĕрешӳре çапăçса паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн, тылра хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Митинга хутшăннисем хушшинче Европăри оккупациленĕ çĕршывсен çамрăкĕсен представителĕсем те пулнă. Çак представительсем ирĕке юратакан халăхсен усал тăшманĕсене — нимĕçсене хирĕç Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе çума-çуммăн тăрса çапăçаççĕ.

Митинга совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн председателĕ, географи наукисен докторĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Евгений Федоров уçнă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: Румыни территорийĕнче кĕрешекен воинсем янă танкист виçĕ орден илнĕ Николай Жирнов, Уралти оборона завочĕн бригадирĕ Лев Батурин, Совет Союзĕн Геройĕ—Днепршăн пынă çапăçусенче пулнă Мария Щербаченко, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чăсĕн командирĕ Богдан Попович, чехословаксен Совет Союзĕнчи пĕрремĕш корпусĕн подпоручикĕ Иосиф Хурави, Белоруссен çамрăк партизанки Совет Союзĕн Геройĕ Надежда Троян, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче кĕрешекен французсен «Нормандия» авиаэскадрильин летчик-истребителĕ Марсель Лефевр, поляксен Совет Союзĕнчи çарĕн сержанчĕ Станислав Ахримович, ЦК ВЛКСМ секретарĕ Александр Шелепин, подводнăй лодка çинче çӳрекен Василий Сосновский тата ыттисем те.

Митинг ячĕпе Совет Союзĕнчи, Великобританири, США-ри, Китайри, Швецири тата ытти çĕршывсенчи çамрăксен организацийĕсемпе обществăллă деятелĕсенчен темĕн чухлĕ саламсем килнĕ.

Митингра пулнă çынсем, çав тери хавасланса, нумайччен хĕрӳллĕн алă çупса, Верховный Главнокомандующий. Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне яма салам йышăннă.

Митинг пĕтĕм тĕнчери çамрăксене чĕнсе калакан çыру йышăннă. (ТАСС).

Ленинградри историллĕ çуртсене юсани

Фашистла ирсĕрсем Ленинградри историне художествăшăн çав тери паха пулса тăракан 240 çурта пурне те мĕн чухлĕ те пулин сиенленĕ. Халĕ историллĕ сооруженисене нумайĕшне юсама пуçланă.

62 снарядпа бомба Главнăй адмиралтейство çуртне лекнĕ. Фронтонсенчи тата шпиль айĕнчи скульптурăсемпе барельефсене юсапă ĕнтĕ. Халĕ адмиралтействăн парадлă залĕсенчи картинисене, мăччисене, чӳречисене тата ыттисене те юсаççĕ.

17 снарядпа 5 авиабомба Зимний Дворецпа эрмитажа лекнĕ. Вĕсене юсас тĕлĕшпе пĕлтĕрех нумай ĕçленĕ, халь вăл ĕç малалла пырать. Халь ĕнтĕ авалхи кантăксене — çутă яракан, анчах та кашни залрах стенасен тĕсне йышăнакан кантăксене хатĕрлемелле пулать. Çавăн пек кантăксене мĕнле тунине халь пĕлмеççĕ. Ленинградри химиксемпе инженерсем вĕсене мĕнле тумаллине шутласа тупма тăрăшаççĕ.

Таврически дворецра тата ытти нумай нитĕ паха çуртсенче чылай пысăк ĕçсем тума палăртнă. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитколлективăн пысăк çитменлĕхĕ

Кино курма пынă колхозниксем пĕр упкăна пухăннă та çĕнĕ хыпарсем çинчен каласса тăраççĕ.

— Севастополе хăвăрт илчĕç пирĕн,— тет пĕри.

— Ытти фронтсенче мĕнле-ши халĕ? — ыйтать тепри.

— Союзниксем Италире наступлени пуçланă тет шулас...

Колхозниксем тата ытти ыйтусемпе те интересленеççĕ. Совет Информаци Бюровĕн юлашки пĕлтерĕвĕсем çинчен, союзниксем Германипе пĕр каварлă государствăсем пирки тунă заявлени çинчен, районра, республикăра çураки мĕнле пыни çинчен пĕлесшĕн вĕсем. Анчах колхозниксем çĕнĕ хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăраймаççĕ.

Мĕнрен килет-ха ку? Сăмах ялти культурăллă ĕçе туса пыма тивĕçлĕ çынсене тивет. Ун пек çынсем Пашалукасси ялсоветĕнче сахал мар. Унта учительсем, комсомолецсем, активистсем йышлă. Агитколлектив 10 çынтан тăрать. Йышĕ пысăк та — ĕçĕ курăнмасть.

Çураки вăхăтĕнче массăллă-ăнлантарулла ĕçе мĕнле туса пырасси çинчен нумай каласнă. Агитколлектив руководителĕ-учительница З. Цеменцева юлташ пĕлтернĕ тăрăх, ĕç планĕ тунă, уйрăм агитаторсене колхозсем çумне çирĕплетнĕ. О. Родионова, Е. Алексеева учительницăсем «1-ое Мая» колхозра агитаторсем шутланаççĕ. Анчах вĕсем хирте сайра-хутра пулаççĕ. Уя тухсассăн та колхозниксемпе сăмах ваклăсах каймаççĕ.

«Красный Октябрь» колхозри агитаторсем пирки те çаплах калама тăла. Агитколлектив руководителĕ пĕр именмесĕрех: «уйра эпĕ икĕ хут анчах пулнă»,—тет.

Агитколлектив ялсоветĕпе тата колхозсемпе тачă çыхăну тытмасть. «Красный Октябрь» колхоз членĕсем çуракине хăвăртрах вĕçлессишĕн хирте йышлăн ĕçлеççĕ. Юнашарти «1-ое Мая» колхозри колхозниксем чылайĕшĕ килте ларнă. «Красный Октябрь» колхозри лайăх пуçарăва «1-ое Мая» колхоза куçарма кирлине ялсоветпа колхоз руководителĕсем те, агитаторсем те асă илмен.

Çак колхозсенче çуракинче тухăçлă ĕçлекенсем сахал мар. Сăмахран, «Красный Октябрь» колхозри сӳреçĕсем В. Арсентьев, А. Сурова, сухалакансем Е. Волкова, А. Митрофанова юлташсем нормăна 1,5 хут тултараççĕ. Анчах агитаторсем вĕсем çинчен пачах та пĕлмеççĕ.

Пашалукасси ялсоветĕнче ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ А. Михеева юлташ çураки пуçланнăранпах уполномоченнăй пулса пурăнать. Анчах вăл кунти агитколлективăн ĕçĕпе интересленмен, агитаторсене тивĕçлĕ кăтартусем паман.

Халĕ колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Икĕ колхозĕ те тĕштырăсене акса пĕтерчĕç, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартма тытăнчĕç. Агитмассăллă ĕçе лайăх туса пынă пулсан, çураки татах та хăвăртрах иртме пултаратчĕ. Çакă вăл агитколлективăн пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

М. ТИТОВ, Т. ИВАНОВ.

Муркаш районĕ. (Хамăр корр.).

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ

Пархатарлă ĕçĕн результачĕ

КУСЛАВККА, майăн 25-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пĕлӳ тĕрĕслевĕ районри пур шкулсенче те ăнăçлăн иртсе пырать. Тĕрлемесри вăтам шкулти 10-мĕш класри вĕренекенсем предметсене лайăх пĕлнине кăтартаççĕ. Çапла, сăмахран, алгебрăпа 7 ачаран 2 ача пятерка, 4 ача четверка, пĕр ача тройка илнĕ. Учитель Коротков юлташ вĕренекенсене çав тĕрĕслеве хатĕрлес тĕлĕшпе сахал мар тăрăшнă.

Пĕлӳ тĕрĕслевне иртерес ĕçре учительсемпе шкул директорĕсене ассистентсем пулăшаççĕ. Шкулсенче ассистентсем пулса пуринчен ытла учительсемех ĕçлеççĕ.

А. ЛАРИОНОВА.

Пĕлӳ тĕрĕслевне пурне те явăçтарман

МУРКАШ, майăн 25-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Янăшри 7 çул вĕренмелли шкулта тăвата класра пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пулса иртеççĕ. Анчах та пĕлӳ тĕрĕслевĕ пур классенче те тивĕçлипе иртмест-ха. Малтанхи кунах тĕрĕслеве 4 ача пыман. Тĕрĕслевре чăваш чĕлхине çителĕксĕр пĕлни палăрчĕ. 5-мĕш класра чăваш чĕлхипе 28 ачаран 3 ача, 7-мĕш класра 16 ачаран 2 ача двойкăсем илнĕ. Ку ĕнтĕ шкулти учительсем ачасене чăваш чĕлхине вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине кăтартать.

Çĕнĕ мартен кăмаки

Енакиеври Орджоникидзе ячĕпе тăракан металлурги заводĕнче (Донбасс) 4-мĕш номер кăмака ĕçлеме тытăннă. Ку кăмака вăрçă пуçланиччĕнхи чухлех продукци парса тăмалла. Кăмакана кăгартнă срокран чылай маларах юсаса пĕтернĕ. (ТАСС).

Поляк патриочĕсен Союзĕн Президиумĕ пĕлтерни

Польшăн Наци Совечĕн уполномоченнăйĕсем Мускава килни

Çак кунсенче Мускава нимĕçсем оккупациленĕ Польшăран, фронт линийĕ урлă каçса, Польшăн Наци Совечĕн уполномоченнăйĕсем килнĕ. Польшăн Наци Совечĕ 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Варшава хулинче тунă. Вăл Совета нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешекен демократиллĕ партисемпе ушкăнсем тунă. Польшăн Наци Совечĕнче çак политикăллă партисемпе обществăллă ушкăнсен представителĕсем тăраççĕ: хресченсен «Стронництво людове» ятлă партийĕн оппозицире тăракан пайĕн, поляк рабочийĕсен социалистла партийĕн, поляк рабочийĕсен партийĕн, наци пуçарулăхĕн комитечĕн, вăрттăн ĕçлекен профсоюзсен движенийĕнчи партире тăман демократсен ушкăнĕн, çамрăксен кĕрешӳ союзĕн, писательсен ушкăнĕн, кооператорсен ушкăнĕн, пуçпа ĕçлекен работниксен ушкăнĕн, ремесленниксен ушкăнĕн, çавăн пекех тата вăрттăн ĕçлекен çак çар организацийĕсен представителĕсем: халăх гвардийĕн, халăх милицийĕн, хресчен батальонĕсен, крайри армин (Сосновский армийĕн) вырăнти çар формацийĕн чылай представителĕсем тата ыттисем те.

Нимĕç захватчикĕсен юнлă пусмăрĕнче пурăнакан Польшăра питĕ йывăр самана тăрать. Çавăн пек лару-тăрура нимĕçсене хирĕç пыракан кĕрешĕве организацилесе тăракан центр кирли питĕ палăрчĕ; çав центр поляксен тăван çĕршывне оккупантсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан ĕçре пĕтĕм Польша халăхĕн вăй-халне чи кирлĕ çĕре ярса тăмалла. Польша халăхĕ Лондонра эмиграцире пурăнакан правительство çине шанни ахалех пулчĕ. Эмиграцире пурăнакан правительство оккупантсемпе нимĕн чухлĕ те кĕрешмерĕ, вăл халăха лăпкă пурăнма чĕнчĕ, ку çеç те мар, вăл гитлеровецсене хирĕç тăракан поляк патриочĕсемпе кĕрешме пуçларĕ. Эмиграцире пурăнакан правительство партизансен отрячĕсене тискеррĕн пĕтересси умĕнче те чарăнса тăмарĕ, çав правительство Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен уйрăм руководительсемпе активистсене тĕрлĕ чее майсемпе вĕлерсе пычĕ. Пĕтĕмĕшле каласан, эмиграцири правительствăн тата унăн Польшăри «делегачĕсен» пĕтĕм ĕçĕ оккупантсем майлă пулса пычĕ, Польшăн политикăллă позицине вăйсăрлатрĕ, Польша пĕрлешӳллĕ нацисемпе союзлă çыхăну тытса тăрассине хавшатса ячĕ.

1943 çулăн вĕçĕнче пулса иртнĕ ĕçсем Польша халăхне чун кĕртсех ячĕç, Польша халăхĕ çывăхри вăхăтрах ирĕке тухма пуласси не хытă шанма пуçларĕ, Польша халăхне пуринчен те ытларах Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыни савăнтарса çĕклесе ячĕ. Анчах та çакăнпа пĕрлех Гитлер террорĕ урса кайнă пек хаярланса кайрĕ, çак террор Польша халăхне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассипе хăратса тăрать.

Çапла ĕнтĕ, Польшăн Наци Совечĕ (Польшăна нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешĕве ертсе пыракан центр пулса тăракан скерне) тупи оккупантсемпе кĕрешекен поляк халăхĕн чунтан кĕтсе тăракан ĕмĕтне хисепе хурса пурнăçланă ĕç пулса тăрать. Польшăн Наци Совечĕ хăйĕн чи малтанхи ларăвĕнче питĕ хаклă решени йышăнчĕ. Çав решени партизансен мĕнпур ушкăнĕсене, хĕçпăшалланнă отрядсене, оккупантсемпе кĕрешекен çар формацийĕсене пурне те пĕр халăх çарне пĕрлештерессипе çинчен калать. Çак Халăх Çарĕн составне акă камсем кĕреççĕ: Халăх гвардийĕ, Халăх милицийĕ, хресчен батальонĕсен чылай пысăк пайĕ тата ытти çар организацийĕсем. Наци Совечĕ тата Халăх Çарне тунине Польша халăхĕ хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ. Çавсене туни ирĕклĕ те демократиллĕ Польшăшăн пыракан кĕрешӳ ĕçĕнче малалла пысăк утăм тунине пĕлтерет тесе шутлать Польша халăхĕ. Польшăн Наци Совечĕ ĕçлеме пуçланăранпа мĕн пурĕ те темиçе уйăх кăна иртрĕ. Анчах вăл çак кĕске вăхăт хушшинчех Польшăна хăйĕн кĕçĕн организацийĕсене (ялти, хулари, облаçри организацийĕсене) чылай вырăнсенче йĕркелесе ячĕ тата çав вăхăтрах Наци Совечĕ оккупантсене хирĕç пыракан халăх кĕрешĕвне те самаях вăйлатса ячĕ.

Польшăн Наци Совечĕн уполномоченнăйĕсем Мускава акă мĕн пирки килнĕ: чи малтан, вĕсем Совет Союзĕнчи поляк патриочĕсен союзĕн ĕçĕпе тата поляксен пĕрремĕш армийĕ мĕнле пурăннипе паллашасшăн, иккĕмĕшĕнчен, вĕсем союзлă правительствăсемпе, вăл шутра Совет Союзĕн правительствипе те, çыхăну тытма пуçласа ярасшăн.

Паллă сăлтавсем пирки Польшăн Наци Совечĕнче тăракан çынсен ячĕсемпе хушамачĕсене, çавăн пекех Мускава килнĕ уполномоченнăйсен ячĕсемпе хушамачĕсене те, хальхи вăхăтра хаçатсенче пичетлесе пĕлтерме май çук.

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ТЕРРАЧИНА ХУЛИНЕ ТӲРТСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 23-мĕшĕ. Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтра татти-сыпписĕр çапăçусем пыраççĕ. Лири шывĕн улăхĕнче улшăнусем пулман. Фронтăн тинĕс хĕрринчи участокĕнче, тусем çинче, Америкăн 5-мĕш армийĕн çарĕсем малалла куçса пыраççĕ, çĕнĕрен паха çӳллĕ вырăнсем тӳртса илнĕ.

Енер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшманăн Италири объекчĕсене тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.150 вĕçевĕ ярăн тунă.

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Италири çапăçусен иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланса кайрĕ. Енер ирхине ирех Анциори плацдармра Америкăн 5-мĕш армийĕ наступлени пуçласа янă. Унти наступлени Англин 8-мĕш армийĕ Лири шывĕн улăхĕнче «Гитлер линине» хирĕç тăвакан наступленипе килĕшсе пырать. Америкăн 5-мĕш армийĕн çарĕсем тĕп фронтра çаплах тăшманăн тĕп оборона позицийĕсен сылтăм флангне атакăланă.

Англин 8-мĕш армийĕн наступленине Канада корпусĕ пуçласа янă. Çак корпус Пантекоран çурçĕртерехре питĕ хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та «Гитлер линине» татнă.

Француз çарĕсемпе Америка çарĕсем тусем çинче тата фронтăн тинĕс хĕрринчи участокĕнче пĕрмаях малалла тапăнса пыраççĕ, вĕсем нимĕçсен тĕп оборона позицийĕсен сылтăм енчи пайне çĕмĕреççĕ.

Анциори плацдармра Америкăн 5-мĕш армийĕн çарĕсем анлă фронтпа тăшманăн минăсем нумай лартса тултарнă тата лайăх хатĕрлесе çитернĕ оборона позицийĕсем патне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Наступлени план тăрăх пулса пырать.

Икĕ фронтĕнче те çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен çар карапĕсем ĕнер каллех тăшман позицийĕсемпе унăн пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене тупăсемпе пенĕ, çапла вĕсем союзниксен çарĕсене Анцио районĕнчи плацдармра наступлени тума пулăшса тăраççĕ. Карапсем çинчен пени самаях пысăк усă парать. Çак карапсем хăйсен туппиcемпе майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа пеме пуçланă. Çавăнтанпа çав çырансем патĕнче тăракан крейсерсем 3 пин снаряд ытла персе янă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсемпе унăн вăрçă объекчĕсене хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Анцио районĕнчи плацдармра Америка çарĕсем Аппиев çулне икĕ километр тăршшĕ участокра тытса илнĕ тата хăйсен Валлетрирен кăнтăртарахра йышăннă территорине аслăлатнă.

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем Террачина хулине йышăннă.

ИТАЛИ ХРЕСЧЕНĔСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

АЛЖИР, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Италирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Бари хулинче Итали хресченĕсен представителĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу правительствăн 1944 çулта вăйлă тырпул туса илмелли программине сӳтсе-явнă. Канашлу делегачĕсем тĕштырра упрама мукачасклачĕсем тунине ырланă. Çак складсем мĕнле ĕçленине хресчен комитечĕсем асăрхаса тăмалла. Ялхуçалăх продукцин пĕр пайне хресченсем пасарта сутаççĕ. Канашлура çĕрĕç министрĕн помощникĕ сăмах тухса каланă. Вăл хресченсене çапла шантарса каланă: хресченсене çурхи ĕçсене тума тата хирти тырпулсене пухса кĕртме кирлĕ мĕнпур ялхуçалăх машинисемпе хатĕрĕсене те çителĕклĕ паратпăр, — тенĕ.

БОЛГАРИ ВЛАÇĔСЕМ БОЛГАРИРИ МОБИЛИЗАЦИЕ ВĂЙЛАТМА ТĂРĂШАÇÇĔ

СОФИЯ, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари армийĕн генеральнăй штабĕ запаса тăракан çар çыннисене, çавăн пекех тата врачсене, аптекарьсене, железнодорожниксене, почтăри служащисене, акă мĕн çинчен асăрхаттарнă: çав çынсем пурин те васкасах хăйсен тĕплĕ адресĕсене пĕлтермелле. Кам та кам хăйĕн адресне пĕлтермест, çавсене генеральнăй штаб çар судне парассипе хăратать.

СТОКГОЛЬМ, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: Болгари правительстви пуçласа янă мобилизаци Германире пурăнакан пур болгарсене те тивет. Мобилизаци пункчĕсене запаса тăракан çар çыннисен, врачсен, химиксен, чиновниксен, 60 çултан иртменнисен, пурин те пымалла. Берлинри радио çакна асăрхаттарса каланă: мобилизаци пунктне пырасран пăрăнакансене хытă айăплаççĕ — 5 çул таран тĕрмене хупса лартаççĕ, хăшпĕр чухне персе пăрахма та тăваççĕ, тенĕ.

БОЛГАРИ ПАРТИЗАНĔСЕН АКТИВЛĂ ОПЕРАЦИЙĔСЕМ

СТАМБУЛ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Трынски районра (Хĕвеланăç Болгари) болгар партизанĕсем жандармсен пĕр полка çитти чăсĕсемпе çапăçнă. Темиçе кун хушши пынă тытăçусенче партизансем жандармсен чăсĕсене пусĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Правительство çарĕнчи салтаксен пĕр пайĕ партизансем енне куçнă. Юлашки вăхăтра Болгарин тĕрлĕ районĕсенче партизансен нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан движенийĕ вăйланса кайнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ИКĔ ХУТЧЕН ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: майăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн пин самолечĕ ытла нимĕçсен Дортмундпа Брауншвейг хулисене тапăннă. Дортмунд районĕнче уяр çанталăк тăнă, бомбăсем нумай пăрахнă хыççăн хулара вăйлă пушарсем тухни лайăх курăннă. Брауншвейг районĕнче пĕлĕтлĕ çанталăк тăнă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн мĕн пулнине курма пулман.

Çавăн пекех тата Орлеанпа Ман чугун çул узелĕсем çине те (Франци) бомбăсем нумай пăрахнă.

«Москито» йышши самолетсем Людвигсхафен хулине тата Бельгири аэродрома тапăннă. Акăлчансен 35 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Майăн 22-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Америка самолечĕсем нимĕçсен тинĕс базине — Киль хулине тапăннă. Майăн 22-мĕшĕнче ирхине Па-де-Кале районĕнчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 23-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, пин истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Германири аэродромсемпе сортировка станцийĕсене тата тĕрлĕ объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем тăшманăн чугун çул объекчĕсене тата унăн Францири аэродромĕсене тапăннă. Çак операцисем вăхăтĕнче Америка бомбардировщикĕсен пĕр соединенийĕ çеç нимĕçсен йышлă мар истребителĕсем хирĕç тăнине тĕл пулнă, анчах вĕсем те нумайĕшĕ çапăçма хăйман.

Майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Берлинпа Дортмунда тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн Францири чугун çул сооруженийĕсем çине бомбăсем тăкнă.

Америкăн йывăр бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк соединенийĕсем паян кăнтăрла Берлин районĕнчи объектсене тата тăшманăн Париж районĕнчи аэродромĕсене тапăннă.

ТУРЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПАНТЮРКИСТСЕН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

АНКАРА, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче вăрттăн ĕçлесе тăнă пантюркистсен организацине тытнă. Çав организацин ĕçĕсем çинчен халĕ правительство пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: Турцин çар влаçĕсем Стамбулпа Анкарара ухтарусем тунă. Вĕсем расистла пантюркистсен «Орхун» журналĕн хуçипе Нихаль Атсызпа çав журнал сотрудникĕсем Зеки Велид, Огуз Тюркан т. ыт. те пурăнакан çуртсенче ухтарнă. Çав çынсем вăрттăн ĕçлесе тăнине кăтартакан тĕрлĕрен документсем, кодсем тата шифрсем тупса конфискациленĕ.

Пĕлтерӳре çапла çырнă: «Конфискациленĕ документсене тĕпчесе вĕреннĕ хыççăн акă мĕн лайăх паллă пулчĕ: çав çынсем хăйсен умне Турци конституцин принципĕсене хирĕç пыракан тĕллеве лартнă, вĕсем çав тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн пулса активлă ĕçленĕ, плансем тунă, тĕрлĕрен килĕшӳсем туса ала пуснă».

ТУРЦИРЕ ФАШИСТСЕМ МАЙЛА ĔÇЛЕСЕ ТĂНĂ ОРГАНИЗАЦИН ĔÇĔСЕМ ПИРКИ СЛЕДСТВИ ПЫРАТЬ

АНКАРА, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Кунти хыпарсем тăрăх, пантюркистсен организацийĕн ĕçĕсем пирки пыракан следстви çак кунсенчех пĕтмелле, вара кун хыççăн ĕçе суда параççĕ. Çак организацие ертсе пыракансем патĕнче ухтарнă чухне вĕсен сиенлĕ ĕçĕсене палăртакан материалсем тупнă. Çав материалсем тăрăх, пантюркистсен организацине ертсе пыракансем Германи шпионĕсем пулса ĕçленĕ.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина президенчĕ Фаррей хушнă тăрăх, Аргентинăри паллă деятельсене нумайĕшне тытса хупнă. Вĕсене правительствăна вырăнтан сирпĕтесшĕн ĕçленĕ тесе айăплаççĕ.

Аргентина правительстви Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи интересĕсене сиенлеме хăтланакан ĕçсене вăйлатса янă. Хаçат уйрăмăнах çакна палăртать: Аргентина правительстви Аргентинăри радио тăрăх Англипе Америка программисене пама чарса лартнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕн Наркомземĕ çапла пĕлтерет: Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳ техникумĕнче çĕрйĕркелекен техниксен-съемщиксен курсĕ уçăлать.

Курсра султалăк çурă вĕренмелле.

Курса 16 çултан çамрăк маррисене, 7-мĕш класран вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлекеннисене илеççĕ.

Курсантсене апатлантараççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, уйăхне 150-шар тенкĕ стипенди параççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ (документпа хăйне, копине мар), хăçан çуралнине кăтартакан справка. Заявленине çак адреспа ямалла: гор. Мариинский Посад, Техникум землеустройства, директору.

Июнĕн 1-мĕшĕнчен вĕрентме тытăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00148 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.